"Чăваш çĕрĕ садсемпе кăна ешертĕр", - тет Николай Семенов

Николай Семенович Семенов, çамрăклах тăван ялтан тухса кайса хулара тĕпленнĕскер, тăватă çул каялла, тивĕçлĕ канăва тухсан, каялла яла тавраннма шут тытнă.

- Çĕнĕ Шупашкарти ăшă сетĕнче пай пуçлăхĕнче эпĕ 20 çул ытла вăй хутăм, - тет вăл, - çав вăхăтрах сад ĕрчетекенсен пĕрлешĕвне те 20 çул хушши ертсе пытăм. Пенсие тухма вăхăт çывхарса пырать, малаллахи пурнăçа ялпа çыхăнтарас терĕм. Яла куçса килес умĕн темиçе çул малтан Çĕнĕ Шупашкарти хуçисем пăрахнă сад участокĕсенче паха сортлă улмуççисемпе грушăсем, кăнтăр енче çеç çимĕç паракан улма-çырла йывăçĕсене çĕршер тĕп çитĕнтертĕмĕр. Тăватă çул каялла Ăвăспӳрт Кипече куçса килсе кунта çĕр илтĕмĕр, çурт лартрăмăр. Çĕнĕ Шупашкарта çитĕнтернĕ 228 тĕп грушăна (51 сорт), 224 тĕп улмуççине (62 сорт), 110 тĕп иçĕм çырли йывăçне (48 сорт), 51 тĕп açтăрхан мăйăрĕн йывăçне (8 сорт) кăларса килсе кунта лартрăмăр.

- Николай Семенович, сирĕн кунта икĕ сад пахчи. Пĕри 18 сотăй, тепри 1,5 гектар ытла. Мĕн кăна тĕрлĕ çимĕç йывăçĕ çук пулĕ кунта! Кашни килтех эпир хура хурлăхан ӳстеретпĕр, анчах мĕнле сорт вăл - никам та пĕлмест. Сирĕн вара "Валовая", "Золотистая Венера", "Белорусская сладкая", "Валентиновка", "Катюша" сортсем шултăра çырлисемпе куça савăнтараççĕ. Кăнтăрти улма-çырла йывăçĕсем те кунта яланлăхах "пропискăна" тăнă: черешня тăватă сорт - "Фатеш","Родно", "Бряночка", "Д-5-11". Абрикос икĕ сорт: "Мичуринец", "Богатырь", вĕсемсĕр пуçне икĕ тĕрлĕ кизил ӳсет, темĕн тĕрлĕ açтăрхан мăйăрĕ... Ăçтан тупса пĕтернĕ эсир çак йывăççене?

- Кизила, açтăрхан мăйăрне Мускавран тупса илсе килнĕ, иçĕм çырлин нумай сортне Шупашкарта пурăнакан иçĕм çырли ăстинчен Голова Алевтина Ивановнăран туяннă. Иçĕм çырлин 10 процентĕ хĕл каçаймарĕ. Эпĕ уншăн пĕрре те кулянмастăп, хĕл каçайман сортсем вырăнне урăх тĕрлисене лартатăп. Чăвашра сортсене тĕрĕслекен ятарлă станци çук, çавăнпа республикăри сад ĕрчетекенсен союзĕ ку ĕçе çĕнĕрен пуçарса ярасшăн. Эпĕ хам ку енĕпе 18 çул ĕçлетĕп, тĕрлĕрен сортсене тĕрĕслесе результачĕсене журнал çине çырса пыратăп. Мĕн кăтартса парать-ха çак тĕрĕслев? Сивве тӳсекен йывăç-и вăл, çимĕçне миçе çултан пама пуçлать, çимĕçĕ шултăра е вĕтĕ, пылак-и вăл е йӳçенке тутăллă. Çимĕç йывăçĕн пĕтĕм пахалăхĕсене йăлт тĕрĕслесе пĕлнĕ хыççăн кăна ăна сад ĕрчетекенсене сĕнме пултаратпăр.

Ăвăспӳрт Кипече куçса килес умĕн эпĕ Канаш район администрацийĕнче ĕçлекенсемпе тĕл пултăм. Канаш, Çĕрпӳ, Тăвай, Йĕпреç, Комсомольски, Вăрмар районĕсенчи сад ĕçне юратакансен пĕрлешĕвне туса хурас пирки хам шухăша пĕлтертĕм. Хулапа район пуçлăхĕсем ман шухăшпа килĕшрĕç, мана пулăшса пыма шантарчĕç. Уйрăмах манăн район администраци пуçлăхĕн çумне Егоров Анатолий Николаевича тав сăмахĕ калас килет.

Пирĕн тĕллев - пысăк пахалăхлă, çуркуннеччен упранакан улма-çырла йывăçĕсем ӳстерсе вĕсене халăх хушшинче сарасси. Патăрьелĕнчи улма-çырла питомникĕ ытларах çуллахи сортсене ӳстерсе сутать. Ĕлĕкрех питомник машинисем кашни района тенĕ пекех çитетчĕç, ял-хула çыннисене улма-çырла йывăçĕсемпе тивĕçтеретчĕç. Халĕ вĕсем ытларах курттăммăн сутма пуçларĕç, районсене тухса çӳреме пăрахрĕç.

Николай Семенович сад ĕрчетекенсене ытларах улмуççин хĕллехи сорчĕсене лартма сĕнет. Акă вĕсем: "Богатырь", "Зимняя красавица", "Подарок Графскому", "Голубь мира", "Бефорест", "Московское зимнее", "Имрус", "Веньминовское", "Строевское", "Орловское", "Полесье", "Солнышко", "Память Тихомирова", "Северный синап", "Уэлси", "Чашниковское", "Татьянин день", "Кутузовец". Вĕсем сивве чăтăмлă, çимĕçе ир пама пуçлаççĕ, улмисем питĕ тутлă. Грушăн çак сорчĕсем пирĕн тăрăхра пысăк тухăç параççĕ, çимĕçĕ чылайччен упранать, питĕ тутлă: "Лада", "Чижовская", "Нарядная Ефимова", "Москвичка", "Память Яковлева", "Августовская роса", "Белорусская поздняя", "Отрадненская", "Крупноплодная Сусова", "Куйбышевская поздняя", "Осенняя крупноплодная", "Тани", "Вахта", "Феникс".

Чăвашра çырма-çатра, типĕ вар нумай. Николай Семенов каланă тăрăх, çырмасенче, варсенче лартнă çимĕç йывăçĕсем сивве лайăхрах чăтса ирттереççĕ, тухăçĕ те пысăк пулать. "Хăçан та пулин пĕтĕм Чăваш çĕрĕнче садсем ешерсе ларасса шанас килет", - тет Николай Семенов.

В.ЛАПИН.
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

Быть ближе к статистике

Интервью руководителя Чувашстата Э.Г. Максимовой редакции газеты "Канаш ен"

- Эльвира Геннадьевна, День статистики на территориях муниципальных образований - новый проект. Что это - дань моде или жизненная необходимость?

- Жизнь не стоит на месте, и адекватное информационное отражение социально-экономических явлений остается важнейшим вопросом как для органов статистики, формирующих эту информацию, так и для органов управления, опирающихся на нее для выработки решений, а также для удовлетворения возрастающего интереса к ней со стороны общественности. В то же время широкий круг статистических данных основан на учетно-отчетных показателях деятельности организаций и органов власти на местах. И во избежание разного рода искажений необходимо регулярное проведение разъяснительной работы среди респондентов. Кроме того, крайне важно повышение статистической грамотности любого специалиста, имеющего дело с анализом массовых явлений, будь то социально-общественные, экономические, технические, научные и другие.

- Какова тема сегодняшнего дня?

- Во-первых, хотелось бы отметить понимание наших инициатив со стороны глав администраций. Оно очень важно. В рамках нынешней программы у меня состоялась встреча с главой администрации района Владиславом Софроновым. Мы вели предметный разговор, связанный с вопросами производственной, социальной сфер и агропромышленного сектора, обсудили ряд типичных проблем, препятствующих нашей работе. Поговорили о комплексе мер к предстоящим широкомасштабным мероприятиям - микропереписи населения 2015 года и Всероссийской сельскохозяйственной переписи 2016 года.

- Тем временем наши специалисты провели ряд отраслевых семинаров с представителями администрации района и сельских поселений, работниками отдельных служб и организаций, которым рассказали о методологических подходах по вопросам статистических обследований. Также обсудили вопросы своевременности и достоверности предоставления статистической информации, проинформировали о преимуществах внедрения электронной отчетности, оказали необходимую консультационную помощь.

- Линия государственной статистики состоит в том, чтобы официальная статистическая информация была полной, достоверной, открытой для пользователя. На сайте Чувашстата в открытом доступе можно найти всевозможные публикации республиканского уровня - сборники, экспресс-информации, ежемесячные доклады, чего не скажешь о муниципальной статистике. С чем это связано?

- Когда мы говорим о муниципальной статистике, то тут все непросто. Во-первых, база данных муниципальных образований начала формироваться относительно недавно и здесь пока много пробелов. Во-вторых, когда мы говорим о формировании показателей базы данных муниципалитета, то надо помнить, что это область малых значений, где, например, может быть лишь одна хлебопекарня, одна мебельная фабрика или один завод. Поэтому сразу возникает много формальных ограничений для публикации, один из которых - соблюдение принципа конфиденциальности. В итоге, муниципальная статистика - самый "бедный" раздел с точки зрения наполнения показателей, причем, это не уникальность региона или страны. Аналогичная ситуация во всем мире.

- Насколько "управляема" публикуемая статистическая информация? Испытываете ли Вы давление со стороны органов власти в части "улучшения" отдельных показателей?

- "Управление" органами статистики со стороны государства заключается в том, что оно финансирует его деятельность. И чем больше объем финансирования, тем больше явлений и объектов будет изучено, тем большее число показателей может быть получено и, соответственно, от этого же зависит качество программных продуктов, используемых для обработки полученных данных и скорость доведения их до потребителя. Аналогично складываются отношения с региональной и муниципальной властью. При заключении соответствующих договоров потенциал органов статистики может быть задействован на проведение дополнительных обследований, направленных на углубленное исследование социально-экономических процессов, актуальных для территории и ее жителей.

Чувашстат тесно взаимодействует с государственными и муниципальными органами, предоставляя им в установленном порядке официальную статистическую информацию по Чувашской Республике, одновременно осуществляя в ходе проведения федеральных статистических наблюдений сбор, в том числе и от них, первичных статистических данных, а также административных данных.

- Расскажите о текущей демографической ситуации в районе.

- Демографическая ситуация в районе остается напряженной. На 1 января этого года в районе, по нашим оценкам, проживает 37178 человек. В январе-июне 2014 года по сравнению с январем-июнем 2013 года число родившихся в районе уменьшилось на 53 человека, или на 16,3%, число умерших увеличилось на 21 человека, или на 7,0%. Число умерших превысило число родившихся на 18,4% (в целом по республике число родившихся превысило число умерших на 2,2%). Показатель рождаемости в расчете на 1000 человек населения в январе-июне этого года составил 14,8 (по республике - 13,8), смертности - 17,5 (по республике - 13,5).

Уровень младенческой смертности по сравнению с январем-июнем 2013 года уменьшился в 2 раза и составил 3,3 умерших младенцев в возрасте до 1 года на 1000 родившихся живыми (по республике - 4,2).

За январь-июнь 2014 года зарегистрировано 116 браков и 57 разводов. По сравнению с аналогичным периодом 2013 года число браков уменьшилось на 20 или на 14,7%, число разводов - на 7, или на 10,9%.

Миграционный отток в январе-июне 2014 года составил 74 человека против 261 человека в январе-июне 2013 года.

- Как думаете, господдержка семьи - материнский капитал - повлиял на рождаемость?

- Судя по всему, повлиял. Всплеск рождаемости как раз пришелся на этот период. Демографическая ситуация в республике, как и по стране в целом, благодаря реализации мер демографической политики и приоритетных национальных проектов существенно улучшилась. Если в 2006 году общее число родившихся по Канашскому району составило 485 человек, то в 2013 году - 625. За январь-июнь этого года в районе родилось 104 ребенка - это 38,2% от общего числа родившихся живыми, - были по очередности рождения первыми, 106 детей (39,0%) - вторыми, 48 младенцев (17,6%) - третьими, 14 детей (15%) - четвертыми и более.

(Окончание на 3-й стр.).

Быть ближе к статистике

(Окончание. Начало на 2-й стр.).

- Поделитесь сведениями о соотношении "работоспособный пенсионер".

- Местное население стареет. Есть такой критерий "доля населения 65 лет и старше". Если доля более 7 процентов, то считается, что население старое. В районе этот показатель почти 1,9 раза больше, - 13.6%, что характерно для республики в целом. Численность подростков в возрасте до 14 лет невелика (17,7%), что в будущем может стать причиной демографического провала. В целом, количество пенсионеров на 14,3% превышает численность молодежи. Доля трудоспособного населения составляет 59,5%.

- Как Вы оцениваете экономику района? И насколько эффективно местная власть справляется с этой задачей?

- На территории города в настоящее время зарегистрировано 388 организаций, из которых 109 определены как малые и средние.

Чувашстат не располагает полнотой информации на уровне муниципального образования, поскольку в соответствии с законодательством сплошные статистические наблюдения за деятельностью субъектов малого и среднего предпринимательства проводятся один раз в пять лет, а в промежутке - выборочные обследования, поэтому мы можем говорить об экономике города лишь на основании сведений организаций, не относящихся к субъектам малого предпринимательства.

Статистические данные показывают: район входит в группу территорий со средним уровнем развития.

Оборот организаций, не относящихся к субъектам малого предпринимательства, в 2013 году увеличился на 17,1% и составил 1713217 тыс. руб. Основной вид деятельности приходится на организации оптовой и розничной торговли; ремонт автотранспортных средств, мотоциклов, бытовых изделий и предметов личного пользования.

Всего в районе на 1 января 2014 года насчитывается 309 организаций. В районе 2 промышленных предприятия. Оба они по итогам I квартала 2014 года работают рентабельно.

Объем отгруженных товаров собственного производства, выполненных работ и услуг собственными силами организаций, не относящихся к субъектам малого предпринимательства, по видам экономической деятельности "Добыча полезных ископаемых", "Обрабатывающие производства", "Производство и распределение электроэнергии, газа и воды" в 2013 году увеличился на о,9%.

Среднемесячная номинальная начисленная заработная плата работников организаций, не относящихся к субъектам малого предпринимательства, в 2013 году сложилась в размере 15238,5 руб., что выше показателя предыдущего года на 18,5%. В январе-мае 2014 года составила 15336,9 рубля. По сравнению с аналогичным периодом 2013 года она увеличилась на 7,9%.

Особое внимание было уделено исполнению "майских" указов Президента России в части повышения заработной платы отдельных категорий работников социальной сферы и науки. Целевые показатели соотношения средней заработной платы работников организаций, повышение оплаты труда которых предусмотрено Указом Президента Российской Федерации от 7 мая 2012 года № 597 "О мероприятиях по реализации государственной социальной политики" и средней заработной платы в Чувашской Республике, предусмотренные на 2013 год в сфере образования, достигнуты. По работникам сферы здравоохранения и культуры данные значения не достигли целевых показателей на 2013 год.

Организациями, не относящимися к субъектам малого предпринимательства, в 2013 году вложено 235,8 млн. рублей, что выше показателя предыдущего года на 80,0%. В I квартале 2014 года освоено 6,5 млн. рублей инвестиций, что в 3,1 раза больше аналогичного уровня 2013 года.

Уровень официально зарегистрированной безработицы на конец июня 2014 года составил по району 0,44% (по республике 0,55%).

Объем производства сельскохозяйственной продукции в хозяйствах всех категорий в 2013 году по предварительным данным сложился на уровне 1785 млн. руб., что ниже показателя предыдущего года на 13,5%. В I квартале т.г. он составил 169 млн. рублей (в I квартале 2013 года - 179 млн. рублей).

Оборот розничной торговли организациями, не относящимися к субъектам малого предпринимательства, в 2013 году составил 861 млн. руб., что выше показателя предыдущего года на 2,8%. В 1 полугодии 2014 года - соответственно 441,1 млн. руб., или 94,8% от 1 полугодия 2013 года.

Объем платных услуг, оказанных населению организациями, не относящимися к субъектам малого предпринимательства, в 2013 году сложился в размере 168,8 млн. руб. (в 2012 году - 148,1 млн. руб.). За январь-июнь т.г. он составил 103,9 млн. руб. (в январе-июне 2013 года - 90,7 млн. руб.).

- В каких секторах экономики самая высокая средняя заработная плата? Насколько она выросла по сравнению с прошлым годом?

- В январе-мае 2014 года уровень среднемесячной начисленной заработной платы по организациям, не относящимся к субъектам малого предпринимательства, в районе составил 15336,9 руб. (по Чувашии - 21622,2 руб.). По сравнению с аналогичным периодом прошлого года она выросла на 7,9%. Самая высокая заработная плата была зафиксирована по виду деятельности "Государственное управление и обеспечение военной безопасности, социальное страхование" (31466,4 руб.). Второе место по этому показателю заняли строители (24596,6 руб.). Третья позиция досталась работникам производства, передачи и распределения электроэнергии, газа, пара и горячей воды (23897 руб.).

- Приближаются два крупных статистических обследования - микроперепись населения 2015 года и сельскохозяйственная перепись 2016 года. Что они дают?

- Мы еще поговорим об этих двух уникальных информационных источниках прогнозов и изменений, происходящих в обществе и сельском хозяйстве. А пока позволю себе процитировать высказывание великого русского писателя Льва Николаевича Толстого о переписи населения Москвы 1882 года, в которой он принимал участие: "Для общества интерес и значение переписи населения в том, что она дает ему зеркало, в которое хочешь, не хочешь, посмотрится все общество и каждый из нас…". И дальше: перепись… "если это не лечение, то это, по крайней мере, попытка исследования болезни, за которую нам надо быть благодарными и по случаю которой нам надо хоть немножко оздоровить себя". Полагаю, нет более четкого определения.

- Большое спасибо за то, что Вы ответили на наши вопросы. Что бы Вы хотели сказать нашим читателям?

- Быть ближе к статистике, оставаться нужными друг другу. Мы стремимся максимально удовлетворить информационные потребности всех категорий пользователей. Ежедневно предлагаем многополосную, многоликую информацию о жизни нашего общества, а вы, пожалуйста, - анализируйте. Ведь большинство людей так и поступают, в частности те, кто согласен с бытующим утверждением "В жизни, как правило, преуспевает больше тот, кто располагает лучшей информацией".

ЫЙТУ-ХУРАВ

Чăваш Енри выçлăх

1921-1922 çулсем Чăваш еншĕн питех те хăрушă пулнă: выçлăх хуçаланнă. Халăх çак инкеке мĕнле майпа чăтса ирттернĕ-ши?

С.МИХАЙЛОВ.

Çав çулсенче выçлăх вăтам тата анат Атăлçире, Хура тинĕс тата Урал тăрăхĕсенчи районсенче, Хĕвел анăç Çĕпĕрте хуçаланнă. 1921 çулхи çуркунне-хи тата çуллахи типĕ çанталăк выçлăх сăлтавĕсенчен пĕри çеç. Тĕнчен пĕрремĕш тата Граждан вăрçи çулĕсенче Чăваш Енри хресчен хуçалăхĕ вăйлă хавшанă. Çар коммунизмĕ тапхăрĕнчи продразверстка та витĕм кӳнĕ.

Икĕ çулта Чăваш Енре выçса тата чирлесе 13238 çын вилнĕ. Облаç хăй тĕллĕн ку инкеке парăнтарма пултарайман. Правительство продразверстка вăхăтĕнче пухса хатĕрленĕ саппассемпе усă курма ирĕк паман. 1921 çулхи çулла тин Мускавра выçăпа аптăракан Чăваш автономи облаçне пулăшма йышăннă. Пулăшăва патшалăхăн анлă кампанийĕ пек йĕркеленĕ. Çак тапхăрта хресченсенчен налук пухассине пăрахăçланă, вăрлăхпа, апат-çимĕçпе, укçапа т.ыт.те тивĕçтерме тытăннă.

Уйрăмах ачасемшĕн тăрăшнă. Чылай ялта пĕчĕккисем валли столовăйсем уçнă. 1921 çулхи чӳк уйăхĕнче вĕсен шучĕ 197 пулнă. 1922 çулхи утă уйăхĕ тĕлне 1549-а çитнĕ. Çавăн пекех аслисене те общество апатланăвĕпе тивĕçтерме тăрăшнă. Выçлăхпа кĕрешмелли тĕп меслетсенчен пĕри – çынсене çĕршывăн ăнăçлă районĕсене тата пурăнма Çĕпĕре ăсатни. Мускава, тĕп тата хĕвел анăç кĕпернесене 5744 ачана эвакуациленĕ. 29000 çын Çĕпĕре тата ытти района тухса кайнă.

Ют çĕршывсем те выçлăхпа кĕрешме нумай пулăшнă. Пĕтĕм тĕнчери ĕç халăхĕн пулăшăвĕн комитечĕ, Америкăн пулăшу администрацийĕ, Хĕрлĕ Хĕрес организацийĕсен урлă 400 пин ытла пăт апат-çимĕç килнĕ. Пĕтĕм тĕнчери тред-юнионсен федерацийĕ выçă ачасем валли 40 пин паек уйăрнă. Патшалăх тата мĕн пур халăх пулăшăвĕ Чăваш автономийĕнчи вун-вун пин çын пурнăçне, ял хуçалăх производствин хăвачĕ чакасран сыхласа хăварнă.

Выçлăх хыççăнхи синкере сирме патшалăх, облаç, уес шайĕнче ятарлă комиссисем йĕркеленĕ. Вĕсем 1923 çулхи раштав уйăхĕн 1-мĕшĕччен экономикăна йĕркене кĕртес, общество апатланăвне йĕркелес, эвакуацине кайнă халăха каялла таврăнма пулăшас тĕлĕшпе ĕçленĕ. Пĕтĕмпе фонда 353467 пăт тырă, 79952 пăт апат-çимĕç, 4916432 тенкĕ укçа, 241 пăт эмел т.ыт. те пухнă.

Чăваш Ен 1921-1922 çулсенчи выçлăхра çĕршывăн ытти районĕнчен вăйлăрах шар курни пĕрремĕш пилĕкçуллăх пуçланичченех сисĕнсе тăнă. Çав тапхăрта арканнă халăх хуçалăхĕ унăн экономикине вăй илме чылай хушă чăрмантарнă.

Юмахри пек илем. В.АЧЧА фотосюжечĕ.

ТĔНЧЕРЕ

Шыв илес хăрушлăх пур

Японире çут çанталăка сăнакансен пысăк канашлăвĕ иртнĕ. Унта этемлĕх умĕнче тăракан пысăк ыйтусене сӳтсе явнă хыççăн анлă доклад хатĕрленĕ.

Докладра палăртнă тăрăх – çанталăк ăшăтнипе Çĕр чăмăрĕ çинче инкек сиксе тухас хăрушлăх çуллен ӳсет. Сывлăш температури хăпарни этем сывлăхне сиен кӳресси паллă. Халех ĕнтĕ ял хуçалăхĕнчи пулас çухатусем çинчен калаçаççĕ. Экспертсем шухăшланă тăрăх – 2050 çул тĕлне тĕнчере куккурус, рис тата тулă 25 процент сахалрах туса илĕç. Апат-çимĕç хăрушсăрлăхĕн ыйтăвĕ çивĕчленнипе патшалăхсем лайăх çĕршĕн вăрçă пуçласса кĕтсех тăр. Паян Америкăпа ун хӳрешкисем çĕр айĕнчи пурлăхпа пуян тăрăхсене тытса илессишĕн çар вăйĕпе усă кураççĕ, ыран пулăхлă çĕрсемшĕн тата таса шывлă вырăнсемшĕн вăрçă тапранса кайĕ.

2050 çул тĕлне Çĕр çинчи халăх йышĕ 9 миллиардран иртет теççĕ. Тĕш тырă культурисен тухăçĕ чаксан выçлăх пуçланасси куç кĕрет. Шăрăха пула пулăсем тропик тăрăхĕнчен çурçĕрти тинĕссене куçнине тĕпчесе пĕлнĕ. Çав регионсенче пулă тытасси 50 процент чаксан халăх мĕн çисе пурăнĕ-ши?

Шăрăх çанталăк чĕр чуна кăна мар, çынсене те ытти вырăна хăвалĕ. Кун пек чухне тытăçу сиксе тухатех. Шыв айне пулакан тăрăхсене те палăртнă. Раççейĕн Амур тăрăхне шыв илни унччен те пулкаланă, юлашки çулсенче хӳтĕлев дамбисем хăпартни инкекрен çăлса хăварайманасть иккен. Çынсене сăртлă вырăна нумай куçарчĕç, теприсем хăнăхнă çĕртен ниепле те куçма килĕшмеççĕ. Ĕмĕрĕпе кунта пурăннă, çакăнтах вилетпĕр, теççĕ.

Шыв-шур тапăнăвне Европа та тӳссе курчĕ. Анчах ку пĕрремĕш тĕрĕслев çеçха. Малашне çанталăк кутăнлашăвĕ мĕнле çухату патне илсе пырассине никам та пĕлмест. Çанталăка сăнакансем ыррине шантармаççĕ. Типĕ çул килсен чухăн çĕршывсем пĕтессипе хăратрĕç. Çӳлти патша пуяннине е чухăннине пăхса тăмасть пулас. Тепĕр енчен шутласан этем хăй çут çанталăка мĕн чухлĕ сиен кӳнине манар мар. Ытти çулсенчи çылăхсене каçарттарма вăхăт.